ВСЕСОЮЗНАЯ БИБЛИОТЕКА
имени В. И. ЛЕНИНА
Отдел Национальной Литературы

26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
13
ВЫРСАРНИКУН
91(6842) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тракторсемпе уйхир ĕçĕсенче ĕçлессине лайăхлатмалли мерăсем çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

МТС тракторĕсем кăçалхи çуракинче мĕнле ĕçленине пăхса тухнă хыççăн, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тракторсемпе уйхир ĕçĕсенче усă курас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртать. Çав çитменлĕхсенчен чи пысăкраххисем çаксем пулаççĕ: чылай районсенчи вырăнти парти организацийĕсем МТС ĕçне çитекĕсĕр ертсе пыраççĕ, тракторсене нумай вăхăт хушши ĕçсĕр тăратнисем, пĕлтĕрхи пекех, нумай пулаççĕ тата тракторсен ĕç тухăлăхĕ начар. Чылай МТС-сенче тракторсене тата ялхуçалăх машинисене техника енĕпе пăхса тăрассине тивĕçлипе организацилемен, çавна пула детальсем часах юрăхсăра тухаççĕ, çĕмĕрĕлеççĕ, çавăн пирки тракторсем ĕçсĕр тăраççĕ. Механиксемпе бригадирсем трактористсене техника енĕпе сахал пулăшнă пирки, колхозсемпе МТС-сем трактор бригадисене хуçалăх енĕпе начар пулăшнă пирки, горючипе шыва тата вăрлăхсене вăхăтра турттарса пыман пирки, ялан ĕçлекен прицепщиксем çитĕлĕксĕр пирки те тракторсем нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр тăраççĕ. Сăмахран, Комсомольски, Первомайски, Кувакино, Пăрачкав, Тăвай МТС-ĕсенче техникăлла çитменлĕхсем пирки кашни кунах нумай тракторсем ĕçлемесĕр тăраççĕ. Пăрачкав МТС-ĕнче çуракин малтанхи кунĕсенчех 9 трактор-ăн шатун подшипникĕсене ирĕлтерсе янă, Шăмăршă, Первомайски, Комсомольски, Кувакино, Октябрьски МТС-ĕсенче те подшипниксене ирĕлтерсе янисем чылай пулнă.

Нумай районсенчи вырăнти партипе совет организацийĕсем тата çĕрĕç органĕсем МТС-семпе колхозсем хушшинче тунă договорсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине начар тĕрĕслесе тăраççĕ. Çакăнпа усă курса, хăшпĕр МТС-сен директорĕсем трактор ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма тăрăшмаççĕ, çапла вара ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тĕп задача пулса тăнине асра тытмаллă. Çак майпа кашни пилĕк кунрах парти райкомĕсен ларăвĕсенче колхозсемпе МТС бригадисенче тракторсем мĕнле ĕçлени çинчен сӳтсе-явмалла, тракторсен паркĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе, уйрăмах тракторсемпе ĕçлемелли плана тултарас ĕçре юлса пыракан районсемпе колхозсенче тракторсен паркĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе, çийĕнчех оперативлă мерăсем йышăнмалла.

2. ВКП(б) райкомĕсене тракторсен паркĕн ĕçне лайăхлатма МТС-сене пулăшас енĕпе оперативлă мерăсем йышăнма хушас. Çакна тунă чухне трактористсем, тата трактор бригадинче ĕçлекен колхозниксемпе совхозсен рабочийĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатса ярасси çине тимлĕн çăвăрăнса пăхмалла.

3. ВКП(б) Обкомĕ асăхтарнă пулин те, Пăрачкав МТС-ĕ тракторсене юсама пăрахнă. Районра туртăм вăйĕ çитĕлĕксĕр пулнă вăхăтрах 6 трактор уйхир ĕçĕнче ĕçлемеççĕ. ВКП(б) Пăрачкав райкомне тата МТС директорне Салмин юлташа майăн 20-мĕшĕччен тракторсене пурне те юсаса пĕтерме хушас.

4. ВКП(б) Обкомĕ районсенчи партипе совет органĕсене çакăн çине çăвăрăнса пăхма хушать: машинăпа тракторсен паркĕн ĕçне лайăхлатмалли чи паха условисенчен пĕри вăл—тракторсене техника енĕпе пăхса тăмалли правилăсене çирĕппĕн пăхăнса пыни пулать. Çакна шута илсе, ВКП(б) райкомĕсене чи сывăх вăхăтрах çакăн пек ĕçсем туса ирттерме хушас: тракторсене хиртех юсама тата техника енĕпе пăхса тăма трактор бригадисенче хирти пысăк мар мастерскойсем организацилемелле, вĕсене машина юсамалли çăмăл инвентарьсем тата кирлĕ чухлĕ инструментсем тупса памалла. Промышленность предприятийĕсен, МТС-семпе совхозсен директорĕсене республикăри заводсенче, МТС-семпе совхозсен мастерскойĕсенче машинăсем юсамалли çăмăл оборудованиесемпе инструментсем кашни трактор бригадине пама кирлĕ чухлĕ туса хатĕрлеме хушас.

Тракторсене техника енĕпе пăхса тăмалли ĕçсене тунă чухне унта трактор бригадисен бригадирĕсем тата вĕсен помощникĕсем хăйсем пулма тивĕçлĕ тата çакăн пек йĕрке тумалла: смена улшăнă чухне пĕр тракторист тепĕр тракториста хăйĕн тракторне парать пулсан, вăл трактора тата унтан кăкарса ĕçлемелли инвентаре техника енĕпе пăхса тăмалли правилăсене пăхăнса памалла.

5. ВКП(б) Обкомĕ çакна палăртать: промышленность предприятийĕсен руководителĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, хăйсене панă плана пурнăçа кĕртмеççĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ промышленность предприятийĕсен руководителĕсене тата парторганизацисен секретарĕсене тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса хатĕрлеме панă заданисене хисеп енĕпе те тата номенклатура енĕпе те пĕр сăмахсăрах тата вăхăтра пурнăçа кĕртмелле тумашкăн халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушать.

6. Çуракин вăхăтĕнче трактор бригадисене тракторсемпе ялхуçалăх машинисене хиртех юсама вăхăтра пулăшас тесе, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене МТС-семпе совхозсен мастерскойĕсене талăкĕпех ĕçлеттерме хушас.

7. Районсенчи партипе совет организацийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас: трактор бригадисем валли горючи, сĕрмелли материалсем, шыв пĕр чарăнусăр илсе пырса тăмалла тăвас пулать, çавăнпа та горючи тата шыв турттаракансене трактор бригадисем çумне ялалăха çирĕплетмелле, тракторсем çак колхозра ĕçлесе пĕтеричченех вĕсем пĕр улшăнмасăр ĕçлемелле.

8. Машинине-тракторнăй станцисен работникĕсем горючие хуçасăрла тата ветсăрăн тăкакланнине пула тата чылай районсенчи партипе совет органĕсен руководителĕсем вăл ĕçе тĕрĕслесе тăманнине пуля, нумай МТС-сенче çурхи уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче горючие чылай таккаласа тата ытлашши расходласа пĕтереççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ парти райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене МТС-семпе совхозсен нефть хуçалăхĕнче тивĕçлĕ йĕрке тума хушать. Çакна май кашни трактор бригадине заправка тумалли инвентарь тата юсавлă тимĕр пичкесем памалла, горючие сыхласа усрама лупасайĕсемне нӳхрепсем туса лартмалла.

9. ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас: горючие законпа кăтартса панă тăрăх кăна расходламалла тăвас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, çавăнпа та трактор-сен хăвачĕне туллин усă курасси çине, вĕсем пушăлла сӳренине чакарасси çине, горючие çаратса тата салатса пĕсренине хирĕç кĕрешесси çине уйрăмăнах тимлĕн çăвăрăнса пăхмалла, çавăн пекех тата трактор бригадисенче горючие шута илес тата расходлас ĕçре çирĕп йĕрке туса хумалла.

10. Нумай МТС-сенче тĕрĕс мар йăла пур: вĕсем МТС-семпе колхозсем хушшинче тунă договорсене пурнăçа кĕртмесĕр тăраççĕ. МТС-сен хăшпĕр директорĕсем договор тăрăх илнĕ обязательствасене пăсаççĕ, колхоз председателĕсем вара нумай чухне договора пăснипе килĕшеççĕ тата хăйсем те илнĕ обязательствасене пурнăçа кĕртмеççĕ.

МТС-семпе колхозсем договор урлă çыхăнса тăрассине çирĕплетес шутпа, ВКП(б) райкомĕсене çапла тума хушас: МТС-семпе колхозсем хушшинче тунă договорсене ĕçсен пĕтĕм хисепĕ енĕпе кăна мар, договор тăрăх тракторсемпе тумалли пур тĕрлĕ ĕçсем енĕпе те лайăх пахалăхпа пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать, ĕçсен срокĕсене пăхăнса пымалла тăвас пулать.

Çакăн пек йĕрке тăвас: МТС директорĕсем, тивĕçлĕ колхозсен председателĕсемне пĕрле, тĕрлĕ ĕçсем енĕпе договор мĕнле пурнăçа кĕнине уйăхра пĕрреллĕ кăна мар тĕрĕслесе тухаççĕ, çав тĕрĕслевĕн результачĕсене колхоз правленийĕсен ларăвĕсенче сӳтсе-явăççĕ, вĕсене сӳтсе-явнă чухне МТС директорĕ е вăл хушнă тăрăх МТС-ăн ответлă работникĕ, çавăн пекех тата çак колхозра ĕçлекен трактор бригадин бригадирĕ обязательна пулмалла.

ВКП(б) райкомĕсен МТС-па колхозсем хушшинче тунă договор мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине хăйсен ларăвĕсенче уйăхра пĕр хутран кая мар сутсе-явмалла, сӳтсе-явниччен малтан вăл ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тухмалла.

11. ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çурхи уйхир ĕçĕсем пĕтнĕ хыççăн çийĕнчех МТС-семпе совхозсен мĕнпур трактороĕсене çĕртме тунă çĕре куçарма хушас.

12. Малта пыракансен опытне МТС-семпе совхозсен тракторисчĕсем хушшинче сарас шутпа, «Чăваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаçатсен редакторĕсене, çавăн пекех тата районри хаçатсен редакторĕсене малта пыракан трактористсен ĕçри опычĕ çинчен анлăн сутатса тăма хушас. Малта пыракан трактористсен ĕçри меслечĕсене, трактора пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттерме пулăшакан меслетсене кăтартса парасси çине уйрăмах тимлĕн çăвăрăнса пăхмалла.

Çак решение республикăри хаçатсенче пичетлесе кăларас.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Ш. де Голль генерал И. В. СТАЛИН Маршала янă телеграмма

Унăн превосходительстви СТАЛИН Маршала

Европăри нумай пынă вăрçă эпир пĕрле çĕнтернипе вĕçленсе пынă тапхăрта эпĕ Сире, Маршал господин, Франци хăйĕн паттăр та хăватлă союзникĕпе хĕпĕртесе, ăна чун-чĕререн юратни çинчен Хăвăрăн халăхăрпа çарăра каласа пама ыйтатăп. Эсир Совет Союзне пусмăрçăсем пулса тăракан державăсене хирĕç кĕрешекен тĕп вăйсенчен пĕри туса хутăр. Шăп çавна пула вара тăшмана çĕнтерме май пулса тăчĕ. Аслă Российăна тата Сире хăвăра пĕтĕм Европа юратмалла туса хутăр, Европа вăл ирĕклĕ пулса çеç пуранăнма тата чечекленсе ӳсме пултарать.

Генерал де ГОЛЛЬ.

Ш. де Голль генерала Франци республикин Вăхăтлăх правительствин Председательне

ПАРИЖ.

Вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçленĕ май Эпир туслăн саламланăшăн Сире, Председатель господин, эпĕ чун-чĕререн тав тăватăп. Çакăнпа пĕрлех эпĕ Сире тата перлехи тăшмана çĕнтерес ĕçе хăйĕн тӳпине хывнă Франци халăхне тав тăватăп тата ырă пурнăç сунатăп.

И. СТАЛИН.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Иосиф СТАЛИН Маршала

Гитлерла Германие хирĕç пынă вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçленĕ май, тăшмана чăплăн çĕнтернĕ май (çак çĕнтерӳ этемлĕх культурине цивилизацине фашистла тискерлĕхрен çăлса хăварчĕ) Сире тата Сирĕн урлă пĕтĕм совет халăхне хĕрӳллĕн саламлатпăр.

Эпир çакна çирĕп ĕненсе тăратпăр: совет халăхĕн паттăрлăхне, совет воинĕсен этем нихçан курман хастарлăхне тата гитлеризмпа кĕрешекен союзлă халăхсен пĕрлĕхне пуля тунă çĕнтерӳ славян халăхĕсен таванлăхне—Польшăн никама пăхăнманлăхĕн тĕрекне—тата ытларах çирĕплетĕ, фашистсем çĕнĕрен тапăнма хăтланассине хирĕç хăватлă чăрман туса хурĕ.

Çĕнтерӳ праçникĕн савăнăçлă кунĕнче Польша халăхĕ Совет Союзĕн халăхĕсемпе гаччăн та туслăн сыхăнса тăрать. Совет Союзĕнчи халăхсем Польша халăхне таванла пулăшу пачĕç, нимĕç захватчикĕсене хăваласа ячĕç. Хамăр тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн тата фашистла Германие аркатса, тăкассинĕн пынă кĕрешӳре Польша воинĕсем те хутшăнса хăйсен тӳпине хывнине эпир савăнса мухтанатпăр.

Пирĕн халăхсем хушшинчи туслăх, пире ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăх çĕнтерсе илме пулăшнăскер, çирĕп мир туса хума та пулăшĕ.

БЕРУТ,
ОСУБКА-МОРАВСКИЙ,
РОЛЯ-ЖИМЕРСКИЙ.

Варшава, 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕ.

Б. Берут господина, Халăх Совечĕн Президентне,
Э. Осубка-Моравский господина,
Польша республикин Вăхăтлăх правительстван
Премьер-Министрне,
М. Роля-Жимерский Маршала,
Польша çарĕн
Главнокомандующине

ВАРШАВА

Славян халăхĕсен тăхçанхи тăшмане—Германи империализмне—çĕнтернĕ май эпир туслă саламланăшăн эпĕ Сире чунчĕререн тав тăватăп.

Поляк халăхне, çак аслă çĕнтерӳре хăйĕн тӳпине хывнăскере, совет халăхĕ ячĕпе тата хам ятпа тăванла саламлатăп. Вăйлă, никама пăхăнман, демократиллĕ Польша туса хурас ĕçре Сире тата пĕтĕм поляк халăхне ăнăçусем тума сунатăп.

И. СТАЛИН.

ВОРОШИЛОВГРАДА ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ВОИНСЕН ПАМЯТНИКНЕ

Ворошиловградри культура паркĕнче Ворошиловграда нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларасшăн çапăçса вилнĕ боецсемпе офицерсен памятникне чăплăн уснă. Çав памятник варринче—автомат тытса тăракан совет воинĕн кĕлетки, ун çинче—арка, ăна пулемет лентине çăвăрса илнĕ тата Отечественнăй вăрçă орденĕ сыпăçтарнă. Асăнтару хăми çине Ворошиловград хулине ирĕке кăларасшăн çапăçнă чухне чăпа тухнă соединенисемпе частсен ячĕсем çырса хунă. (ТАСС).

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕнчен

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ партипе советăн питĕ чăплă деятелĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕн хĕпăшаллă вăйĕсене организацилеме сыпсенчен пĕри, ĕççыпăнсен ĕçĕшĕн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнĕ çын, ВКП(б) Центральный Комитечĕн тата Мускав Облаçĕпе Хула Комитечĕн Секретарĕ, Хĕрлĕ Çăран Политикăллă Главнăй Управленийĕн Начальникĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ Александр Сергеевич **Щербаков** юлташ вилни çинчен çав тери хурланса пĕлтерет.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ.

СССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариатĕнчен

СССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариачĕ, çав тери хурланса, Хĕрлĕ Çара çапла пĕлтерет: кăçалхи майăн 10-мĕшĕнче, нумай вăхăт хушши ĕнтăр чирлесе выртнă хыççăн, **А. С. Щербаков** генерал-полковник—Хĕрлĕ Çăран Политикăллă Главнăй Управленийĕн Начальникĕ, большевиксен партийĕпе Хĕрлĕ Çăран чи паллă руководителĕсенчен пĕри—вилчĕ.

Хаклă юлташа çухатнăшăн Хĕрлĕ Çар пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле хурланать, хăйĕн çапăçусенче чапа тухнă ялавĕсене тытать.

СССР Оборона Халăх Комиссариачĕ.

А. С. Щербаков тупăкĕ умĕнче

Майăн 11-мĕшĕнче Мускаври ĕççыпăнсем Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлне, большевикла питĕ чăплă руководителе тата государствăн çав тери паллă деятельне Александр Сергеевич Щербакова юлашки хут пырса курнă.

Союзсен Çурчĕн Колоннăллă залĕ (Щербаков юлташăн тупăкне çав зала лартнă)—хуйхăллă сăн-сăпат йышăнна. Тупăк лартнă вырăн тĕлне хура хаю тыттарнă ялавсене тайса хунă, çав вырăн тавра чечек кăмăлĕсем нумай хурса тухнă, вĕсене ВКП(б) Центральный Комитечĕ, И. В. Сталин юлташ, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, СССР Оборона Халăх Комиссариачĕ, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, ВКП(б) Мускав комитечĕ, ВЦСПС президиумĕ, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, ĕççыпăнсен депутачĕсен Мускав хула Совечĕ, совет, наука, общество организацийĕсем, А. С. Щербаков юлташăн тăванĕсемне тусĕсем хунă.

Пирĕн государствăн питĕ талантлă деятелĕ, хамăр Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтермешкĕн питĕ нумай тăрăшнă çын вилни çинчен каласкан хыпар кашни совет çыннине питĕ хуйхăртнă.

А. С. Щербаков хăйĕн боевой вырăнĕнче, воин пек, çĕнĕ пурнăç тăвакан çын пек вилнĕ, Тăван çĕршывпа халăхăн интересĕсем (А. С. Щербаков юлташ мĕн виличченех çав халăхăн чунтан парăнса ĕçлекен ывăлĕ пулнă) умăн пуринчен те хаклăрах пулнă.

Кăнтăрла 4 сехетре Колоннăллă зала А. С. Щербаков тупăкĕ патне Мускавра пурăнакан темиçе пин çын вĕçĕ-хĕррисĕр пыма пуçланă. Тупăк çумĕне ученăйсем, писательсем, рабочисемпе инженерсем, столицăри парти, совет тата общество организацийĕсен работникĕсем, 1941 çулхи октябрьти хăрушă кунсенче ВКП(б) Мускав хула тата область комитечĕсен секретарĕ А. С. Щербаков ертсе пынипе Тăван столицăна хӳтĕлеме тăнăскерсем, утса пыраççĕ.

Тупăк çумĕне Хĕрлĕ Çăран боецĕсем, офицерĕсем тата генералĕсем иртсе пыраççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çăран Политикăллă Главнăй Управленийĕн Начальникне, хăйĕн организаторĕ талайтне тата вĕресе тăракан вăйне Отечественнăй вăрçăра хамăр халăх çĕнтерес ĕçе пăнăскере, юлашки хут пырса курса хисеп тăваççĕ.

Чайковскин, Бетховенăн, Шопенăн хурлăхлă кĕввисем янăраса тăраççĕ. Хисеплĕ хураçта А. А. Андреев, пытарма тунă Правительство комиссийĕн членĕсем—Н. М. Шверник, М. Ф. Шкирятов, Г. М. Попов, Б. Н. Черноусов, А. Ф. Горкин, Г. Ф. Александров, Ф. И. Голиков тăраççĕ. Хурала Совет Союзĕн Геройĕсем, генералсемпе офицерсем—çар академийĕсен преподавателĕсемпе вĕренекенĕсем, Хĕрлĕ Çăран Политикăллă Главнăй Управленийĕнчи командирсем, Халăх Комиссарĕсем, наука деятелĕсем, искусство мастерĕсем, писательсем, столицăри предприятисен стахановецĕсем тăраççĕ.

Зала çĕнĕрен те çĕнĕрен чечек кăмăлĕсем илсе кĕреççĕ. А. С. Щербакова курма пыракан Мускав çыннисен речĕ темиçе квартал тăршшĕ тăсăлнă. А. С. Щербакова юлашки хут курса чыс тума темиçе пин çын пынă; А. С. Щербаков хамăр Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕшĕн ĕççыпăнсем ăна çав тери хисепленĕ, çав тери юратнă.

Тупăк çумĕне ертсе пыракансен нумайĕшĕн кăкарĕсем çинче—«Мускава хӳтĕленĕшĕн» ятлă медальсем. Мускавшăн паттăрăн çапăçнă çынсем столицăна хӳтĕлес ĕçе организацилеме чи паллă çынсенчен пĕрин тупăкĕ çумĕне пĕр чĕнмесĕр хуйхăллăн иртеççĕ. Хĕрлĕ Çар Мускав облаçне гитлерла захватчиксенчен тасатма хыççăн А. С. Щербаков хуçалăхна культурăна юсаса ура çине тăратас ĕçе ертсе пынă; вăл ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе пула, Мускав облаçĕнчи хуласенче немĕç оккупанчĕсем хуçаланнин ĕçĕсем куксеренех, сехетсеренех пĕтсе пынă, хуçалăхпа культура юсанса пынă.

Хисеплĕ хурала Н. А. Вознесенский, РСФСР Совнаркомĕн Председателĕ А. Н. Косыгин, Химипромышленность Халăх Комиссарĕ М. Г. Первухин, Хура металлурги Халăх Комиссарĕ И. Т. Тевосян, Çĕркăмăк промышленность Халăх Комиссарĕ В. В. Вахрушев, Авиаци промышленность Халăх Комиссарĕ А. И. Шахурин, Г. М. Димитров тата ытти çынсем те тăраççĕ.

Тупăк çумĕне Наркомпросăн, Çар академийĕсен, столицăри аслă шкулсен делегацийĕсем иртсе пыраççĕ. 9 сехет те 30 минутра зала И. В. Сталин, К. Е. Ворошилов, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Л. М. Каганович кĕреççĕ. Вĕсем хисеплĕ хурал тăраççĕ.

А. С. Щербакова юлашки хут пырса курма Союзсен Çурчĕ патне çĕрле пуличченех вунпăр пин çын пынă. Çурçĕр иртсен пĕрремĕш сехетре зала çынсене кĕртме чарăнаççĕ. Правительство комиссийĕн членĕсем, А. С. Щербаковăн тусĕсемпе юлташĕсем, тăванĕсемпе çывăх çынсем тупăк патне пыраççĕ. Хурăхлă марш кĕввипе утса, А. С. Щербаковăн тупăкне крематорие илсе каяççĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕпе Польша республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договора СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ратификацилени

1945 çулхи майăн 11-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Польша республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен 1945 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче Мускавра тунă договора ратификациленĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш республикинчи суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсенчи, предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенчи рабочисене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 82-мĕш номерĕнче).

8. Иван Гаврилович **Бархатова**—Советски райпотребсоюзăн председательне.

9. Анна Григорьевна **Батинăна**—Кувакино райпотребсоюзĕн хатĕрлев кантурĕн старши бухгалтерне.

10. Иван Никитич **Беляникина**—Торг-илодоовощĕн Чăваш республикинчи кантурĕн управляющине.

11. Мария Михайловна **Бердниковаăна**—Чăваштерăн Улатăрти отделенийĕн 9-мĕш номерлĕ магазин заведующийĕн помощникне.

12. Пелагея Андреевна **Берендеевăна**—Чăваштерăн Шупашкарти отделенийĕн 16-мĕш номерлĕ магазин директорĕн помощникне.

13. Дмитрий Михайлович **Бяинова**—Атăл леш енчи вăрманпромхозăн ОРС начальникне.

14. Анастасия Андреевна **Бычковăна**—Улатăр станцийĕ çумĕнчи ДП—2 ОРС-ĕн 1-мĕш номерлĕ столовăйĕнчи старши повара.

15. Анна Ивановна **Вяткоăна**—Чăваштерăн Шупашкарти отделенийĕн 9-мĕш номерлĕ магазинĕн заведующине.

16. Петр Григорьевич **Гаврикова**—Çĕмĕрле райсовет исполкомĕн суту-илӳ отделĕн заведующине.

17. Александра Ивановна **Голевăна**—Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн контрольпе учет бюровĕн начальникне.

18. Валентина Константиновна **Голубчикăна**—Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн çăкăр секторĕн начальникне.

19. Евстафий Григорьевич **Григорьева**—Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн карточка бюровĕн начальникне.

20. Афанасия Петровна **Гришманова**—Улатăр хулинчи столовăйăн старши поварне.

21. Николай Иванович **Гусева**—Чăваштерăн Шупашкарти отделенийĕн главнăй бухгалтерне.

22. Самуил Израилевич **Дахнина**—Воентерăн Шупашкарти отделенийĕн 2-мĕш номерлĕ магазинĕн заведующине.

23. Евдокия Яковлевна **Ермаичеваăна**—Çĕмĕрлери механизацилеме вăрман пункчĕ çумĕнчи ОРС-ăн 1-мĕш номерлĕ столовăйĕнчи старши повара.

24. Николай Иванович **Журавлева**—СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи главнăй госторгинспекторне.

25. Павел Михайлович **Занина**—Чăваштерăн Улатăрти отделенийĕн производство мастерскойĕнчи закройщика.

26. Анна Ивановна **Ивановăна**—Шупашкарти столовăйсен тресчĕн подсобнăй хуçалăхĕнчи сысна пăхакана.

27. Агриппина Тимофеевна **Ильинана**—Чăваштерăн Шупашкарти отделенийĕн 16-мĕш номерлĕ магазинĕн заведующине.

(Малалли пулать).

Майăн 13-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кроссĕ пулса иртет

Паян профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи иртӳрекен кроссĕ пуçламать, вăл—çулла иртӳрекен чи массăллă спорт ĕçĕ пулса тăрать. Кросс майăн 20-мĕшĕччен пырать, урăхла каласан, пĕр эрне хушши пырать. Çав вăхăт хушшинче кроса ĕçсыпăнсен чи анлă массисене хутшăнтарма, спорт тĕлĕшпе чи лайăх результатсем кăтартма тăрăшмалла.

Кросс программине çырма-çатралла вырăнта чупасси тата граната ывăтасси кĕрет. Кăçал кроса хутшăнма çынсен шутне чупмалли çула чупса тухнă çынсем тата программăра кăтартнă мĕнпур йышши спорта хутшăннисем сĕç кĕреççĕ.

Кросс комсомол органĕсен çарăç физкультура комиссийĕсемпĕн пысăк экзамен пулса тăрать. Çав Комиссисен ĕçне чĕртсе ямалла. Комсомол активисчĕсен кроса хутшăнса пример кăтартмалла. Кроса всевобучăн вĕренӳ пункчĕсенчи боецĕсене, ФЗО шкулĕсемпе чугун çул училищисенче вĕренекенсене, çавăн пекех тата вăтам шкулсемпе çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче вĕренекенсене хутшăнтарасси çине уйрăмах вăйлă çăвăрăнса пăхмалла.

Паян—пурте старта! Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросне кăтартуллăн иртӳпер!

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн çарăç енĕпе ĕçленĕ секретарĕ.

Совет Информацин Бюровĕнчен

МАЙĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 11-мĕшĕнче ЛЕНИНГРАД фронтăн çарĕсем çаплах нимĕç çарĕсен Курляндири ушкăнĕн парăннă соединенийĕсемпе тăсăсене йышăнса пынă. Майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче 133.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тата 14 генерал тытăнă парăннă. Тытăнă ирĕк генералсем хушшинче, ку тăрăнччен пĕлтернисемсĕр пуçне, çаксем пур: 563-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ НЕЙМАН генерал-лейтенант, 87-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ШТРАХВИЦ генерал-лейтенант, 30-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ХЕНЦЕ генерал-майор, 263-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ХЕМАН генерал-майор, 24-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ШУЛЬЦ генерал-майор, 21-мĕш авиаполевой дивизин çапăçури ушкăнĕн командирĕ БАРТ генерал-майор. Пĕтĕмпе çакăн чухлĕ трофей шута илнĕ: самолетсем—75, танксемпе хăй тĕлĕн çӳренисен тупăсем—244, хир тупписем—948, минометсем—323, пулеметсем—2.932, винтовкăсемпе автоматсем—41.310, бронетранспортерсем—130, автомашинăсем — 3.478, трактерсемпе тягачсем—215, радиостанцисем—223, çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсем—3.332, лашасем—11.280. Парăнакансене тытăнă илесси тата трофейсене шута илесси малалла пырать.

Фронт çарĕсем, Рига заливĕпе Балтика тинĕс çыранĕсене тухса, Курляндри çурутравне пĕтĕмĕшпех йышăннă.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ВИСЛА вăрри районĕнче парăннă нимĕç çарĕсен соединенийĕсемпе тăсăсене йышăнса пĕтернĕ, йышăннă территорине шăртласа, унта юлнă тăшманăн пĕчĕк ушкăнĕсемпе уйрăм салтакĕсене тытса пынă. Парăннă 20.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тата 3 генерала йышăннă. Çакăн чухлĕ трофей шута илнĕ: самолетсем — 50, танксемпе хăй тĕлĕн çӳрекĕн тупăсем—20, хир тупписем—300, минометсем—134, пулеметсем—2.500, винтовкăсемпе автоматсем—15.000, бронетранспортерсем—53, автомашинăсем—5.912, радиостанцисем—30, лашасем—1.570.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем ВИСЛА вăрри районĕнче, ДАНЦИГРАН хĕвелтухăçнерехре, тата ПУТЦИГЕР-НЕРУНГ сăмсахĕнче, ГДЫНЯ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, парăннă нимĕç çарĕсене йышăннă. Майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче 35.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тата 7 генерал тытăнă парăннă. Тытăнă парăннă генералсем хушшинче, халиччен пĕлтернисемсĕр пуçне, 12-мĕш авиаполевой дивизин командирĕ ШЛИППЕР генерал-лейтенант пур. Унсăр пуçне тата БОРНХОЛЬМ утравĕ çинче 12.000 çынна гарнизон начальникĕпе ВУТМАН генерал-лейтенантпа пĕрле тытăнă илнĕ. Çапла вара, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронтра 47.000 çынна тытăнă илнĕ. Пирĕн çарсем БОРНХОЛЬМ утравне йышăннă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем майăн 11-мĕшĕнче нимĕçсен ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал командир пулса ертсе пыракан çарĕсене, парăнма килĕшменсенсене, хăваласа пынă, малалла иуçса пырса, Чехословаки çĕрĕнче ЖИГЛЕ, КРАЛОВИЦЕ, РАКОВНИК, КЛАДНО, БРАНДИС, МЕЛЬНИК, ЛАБА ÇИНЧИ ЛИСА, МЛАДА БОЛЕСЛАВ, ДОБРОВИЦЕ, БОУСОВ, ИИЧИН, ГОРЖИЦЕ, ЯРОМЕРЖ хулисене йышăннă. ХЕМНИЦ хули районĕпе ПИЛЬЗЕНТАН хĕвелтухăçнерехри РОКИЧАНЫ хули районĕнче фронт çарĕсем Америка çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче фронт çарĕсем пĕр йĕркесĕр парăннă 121.663 нимĕç салтакĕпе офицерне тата 7 генерала тытăнă илнĕ. Тытăнă илнĕ генералсем хушшинче çаксем пур: эсэсовецсен 31-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ КЕМПФ генерал-лейтенант, сывлăшран тапăнасран хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕп-чев институчĕн начальникĕ ШТУБЕНРАУХ генерал-лейтенант, ГЛАТЦ хули комендантче ПЕТШ генерал-майор тата строительство отделĕн начальникĕ ГЕРМАН БАХЕР генерал-майор. Нимĕçсен пилĕк аэродромĕнче фронт çарĕсем 272 самолет тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал командир пулса ертсе пыракан çарĕсен хĕвеланăçнеяле тараккан ушкăнне хăваласа пынă, Чехословаки çĕрĕнче НОВЫЙ БИДЖОВ, МЕСТЕЦ КРАЛЕВЕ, ХЛУМЕЦ, КОЛИН, КУТНА ГОРА хулисене йышăннă. Майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче фронт çарĕсем пĕр йĕркесĕр парăннă 35.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тытăнă илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕлĕн çӳрекен тупăсем—127, хир тупписем—820, минометсем—510, пулеметсем — 1.700, винтовкăсемпе автоматсем—15.000 ытла, автомашинăсем—1.500, çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсем—6.000, паровозсем—53, чугун çул вагонĕсем—3.700, лашасем — 500.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем майăн 11-мĕшĕнче нимĕçсен ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал ушкăнĕн тата ВЕЛЕР генерал-полковникăн парăнма килĕшмен çарĕсенĕ хăваласа пынă, малалла ăнăçлăн иуçса пырса, Чехословаки çĕрĕнче ХОТЕБОРЖ, ЛЕДЕЧ, ВЛАШИМ, БИСТРЖИЦЕ, МИЛИЧИН, ЯЕСТЕБНИЦЕ, ТАБОР, ПЕЛЬГРЖИМОВ, СОБЕСЛАВ хулисене йышăннă. Фронт çарĕсем ЧЕСКЕ БУДЕЕВИЦЕ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра Америка çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Сăвăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем ЧЕСКЕ БУДЕЕВИЦЕ хулинчен нăйтăр-хĕвелтухăçнерехре малалла иуçса пынă. Австри çĕрĕнче ГМЮНД, ВЕЙТРА, ЦВЕТТЛЬ, ОТТЕНШЛАГ хулисене йышăннă та ЛИНЦ хулинчен нăйтăр-хĕвелтухăçнерехри районра Америка çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче фронт çарĕсем пĕр йĕркесĕр парăннă 98.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тата 8 генерала тытăнă илнĕ. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—40, танксемпе хăй тĕлĕн çӳренĕ тупăсем—107, хир тупписем—175, автомашинăсем — 468, çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсем—1.560, чугун çул вагонĕсем—430.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем майăн 11-мĕшĕнче нимĕçсен хĕвеланăçнелле чăнаканн çарĕсене ăнăçлăн хăваласа пынă, тăшман çарĕсен пысăк пайне парăнтарнă. Малтанăхаа палăртнă тăрăх, фронт çарĕсем майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче 106.000 нимĕç салтанĕпе офицерне ытла тата 5 генерала тытăнă илнĕ. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—238, танксемпе хăй тĕлĕн çӳренĕ тупăсем—214, хир тупписем— 1.252, минометсем—212, пулеметсем — 12.000, винтовкăсемпе автоматсем — 25.000, автомашинăсем—5.600, паровозсем —214, чугун çул вагонĕсем—5.260, çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсем—2.570, лашасем—2.690.

Çапла вара, майăн 9-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче мĕнпур фронтсенче 560.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тата 45 генерала тытăнă илнĕ.

Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне чăвашла тата вырăсла пичетлесе кăларнă

Чăвашсен Государство Издательствин Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне уйрăм кĕнекен чăвашла тата вырăсла пичетлесе кăларнă. Кĕнекесен тиражĕ—10.000-шер экземпляр.

Майăн 5-мĕшĕ — Тĕштырăсемпе куракссене акса пĕтермелли вунăкунлăх — Майăн 15-мĕшĕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Пурăç тĕштырăсем анăç иртнĕ çулхи курăнсемĕр пуçне	Вăл шутра пĕрчăлĕ тата пăрăç йышши культурăсем	Пĕр çын ӳсенĕн курăнсем анăç
Шăхасан	77,8	93,7	59,0
Чурачăк	75,3	88,5	48,8
Вăрнар	73,9	90,6	99,8
Красноармейски	68,3	84,4	53,2
Калинино	67,4	93,2	76,4
Çĕрпӳ	65,8	80,2	72,4
Елчĕк	65,1	64,8	13,0
Мурăш	63,1	74,8	61,7
Шупашкар	62,9	81,5	48,7
Сĕнтĕр	61,8	84,1	99,4
Канаш	59,4	73,9	7,9
Советски	56,6	73,4	45,7
Октябрьски	51,1	29,5	—
Етĕрне	50,3	64,4	75,4
Ишлей	50,0	60,6	52,1
Вăрмар	49,5	57,9	40,6
Сĕнтĕрвăрри	49,4	65,8	46,1
Куславкка	46,6	56,3	45,0
Шăмăршă	46,4	52,3	43,3
Комсомольски	46,3	52,7	27,5
Чкаловски	46,2	52,2	39,4
Элĕк	40,1	50,0	10,6
Тăвай	39,2	43,4	—
Хĕрлĕ Чутай	33,5	41,2	14,7
Пăрачкав	33,4	38,4	—
Улатăр	33,2	40,9	32,2
Первомайски	31,4	38,1	14,0
Йĕпреç	31,3	33,9	—
Сĕмĕрле	29,5	38,0	29,2
Кувакино	27,8	31,7	23,7

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ МАШИННО-ТРАКТОРНĂЙ СТАНЦИСЕМ 1945 ÇУЛХИ МАЙĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ ПЛАННЕ МЕН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

МТС-сен ячĕсем	Плана тултарнă
Вăрнар	104,2
Шăхасан	79,5
Красноармейски	74,0
Çĕрпӳ	70,6
Йĕпреç	69,5
Куславкка	66,6
Ишлей	64,0
Канаш	60,5
Чкаловски	60,2
Калинино	60,0
Елчĕк	56,1
Улатăр	47,3
Хĕрлĕ Чутай	45,1
Комсомольски	43,5
Вăрмар	39,7
Шупашкар	39,3
Элĕк	38,3
Сĕнтĕрвăрри	37,4
Сĕмĕрле	35,7
Первомайски	35,6
Сурăки Майдан	35,5
Кувакино	33,0
Тăвай	28,9
Сĕнтĕр	27,7
Пăрачкав	27,3
Етĕрне	26,5
Шăмăршă	21,2
Сивва	17,7
Октябрьски	15,0

Юлса пыракан колхозсем те пур

КУКЕС, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕçсăмахсем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне пысăк хаваслăхпа сырăнаççĕ. Паянхи куна пурĕ 4.800.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Пушай колхозсем заем укçине çийĕнчех тӳлесе татаççĕ. «Осоавиахим» колхозра çĕнĕ заема 77.000 тенкĕлĕх, «Правда» колхозра 112.000 тенкĕлĕх сырăннă та укçине çав кунах пухса пĕтерĕç. Çавнашкалах заем укçи пухасси «Красный флот», «Молотов», «1-ое мая» колхозсенче те ăнăçлă пырать. Ку колхозсем заем укçине çав кунсенчех пухса пĕтереççĕ. Районĕпе пурĕ 1.667.000 тенкĕ пухнă.

Анчах районри чылай колхозсенче заем укçине пухас тĕлĕшпе çитĕлĕксĕр ĕçлеççĕ. «Сывлăш», «Красная звезда», «Большая Волга» тата «Труд» колхозсенче заем укçине сарнăн 10—12 процентĕ чухлĕ кăна пухнă. Кунта заема сырăнине лăплансе ларнă.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) райком секретарĕ.

Ĕçлĕ тырпул звени

Мурăш районĕнчи «Восток» колхозра комсомолецсемпе çамрăксенчен 13 çыран вăйлă тырпул звени тунă. Звеновод пулса комсомолка Тоня Тимофеева ĕçлет. Çав звено ĕçлекен участока пĕтĕмпех сортлă тырăпа акаççĕ тата пĕтĕм лаптăкне çĕрĕ тислĕкпе, кĕлпе çеçетнĕ. Звено членĕсем уйрăм участоксем çинче ăмăртса ĕçлеççĕ.

П. СМИРНОВ.

Заем укçине çийĕнчех пухса пырар

Тăватă çула яхăн пынă юнлă вăрçă чарăнчĕ. Нимĕç захватчикĕсем аркатнă хуласемпе ялсене ура çине тăратма, промышленноçпа ялхуçалăхне, наукăпа культурăна малалла аталантăрса пыма государствăна укçа нумай кирлĕ. Майăн 5-мĕшĕнче кăларнă çĕнĕ заем пирĕн государствăн укçа-тенкĕ хăватне вăйлатма чылай пулăшĕ. Совет Союзĕпе илсен, заема 25 миллиардран иртерсе сарнă та ĕнтĕ.

Çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç пирĕн республикăра та ăнăçлă пырать. Майăн 12-мĕшĕ тĕлне ăна пурĕ 138.810.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран колхозниксемпе единоличниксем 85.130.000 тенкĕлĕх сырăнса илнĕ.

Чылай районсем çĕнĕ заема бюджетпа пăхнă чухлĕ е иртерсе те сарчĕç. Заем сарас ĕç Улатăр, Канаш, Кувакино, Пăрачкав тата Шăмăршă районĕсенче янăх пырать. Асăннă районсенче колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем сарас тĕлĕшпе тимлĕнрех ĕçлемелле.

Йывăр вăрçă чарăнни пирĕн ĕçсăмахсене калама çук самантрчĕ, вĕсен государствăна пулăшас кăмăлне ӳстерчĕ. Сталин юлташ вăрçă пĕтнĕ хыççăн халăха чĕнсе калайни çине ответлесе, пирĕн ĕç хресченĕсем заем укçине çийĕнчех тӳлеме тăрăшаççĕ. Майăн 12-мĕшĕ тĕлне республикăра колхозниксемпе единоличниксенчен пурĕ 32.890.000 тенкĕ пухнă. Çака вăл хăйсем заем сырăнинн 28,6 процентчĕ пулать.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе халĕ Мурăш, Куславкка, Вăрнар, Чурачăк, Красноармейски, Сĕнтĕр, Вăрнар, Калинино тата Ишлей районĕсем лайăхрах ĕçлеççĕ. Çак районсенче заем укçине сарнăн 30—60-шер процентчĕ чухлĕ пухнă.

Анчах та çака курăнать: малта пыракан районсенче те заем укçине пурне пĕр вăхăтра тӳлемеççĕ. Хăшĕпĕрисем хăйсен государство умĕнчи тивĕçне заем сырăнинпех пурнăçланă теесе, укçине çийĕнчех тӳлеме тăрăшмаççĕ. Финанс работникĕсем, заем уполномоченнăйĕсем тата налог агенчĕсем çавăн пек ялса пыракан çынсен пухăш-кăмăлĕсемпе килĕштерсе пурнăçлаççĕ, заем укçине пухас ĕçе кирлĕ пек организацилемеççĕ. Вĕсем ялсенче заем сырăнтарасси—ĕçĕн пусламăшĕ кăна пулса тăнине манаççĕ. Халĕ заем кампанин ялсенчи тĕп задачи—заем укçине вăхăтра тата пĕтĕмпех пухса ситуесси пулать.

Анчах та хăшĕпĕр районсем укçа пухас ĕçе вăраха хăварса пыраççĕ. Çак тĕлĕшпе уйрăмах Йĕпреç, Первомайски, Шăмăршă, Элĕк, Етĕрне, Кувакино районĕсем начар ĕçлеççĕ. Вĕсем заем укçине сарнăн 4—14 процентчĕ чухлĕ çеç пухнă. Улатăр, Пăрачкав, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем те укçа пухас тĕлĕшпе ситуленсĕр ĕçлеççĕ-ха.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе çапла сӳрĕк ĕçленĕшĕн чи малтан ĕçсăмăнни депутачĕсен районсемпе ялсенчи Советĕсен исполкомĕсем, финанс пайĕпе перекет кассисен работникĕсем тата заем уполномоченнăйĕсем ответлă пухса тăраççĕ. Вĕсем ялсенче заем укçине пухас тĕлĕшпе массăлла-ăнлантару ĕçне туса пыманнăçĕ. Ĕç хресченĕсене заем тӳлеме кирлĕ укçана хатĕрлеме пулăшмаççĕ. Вĕсем, ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çак тĕлĕшпе панă кăтартăва пурнăçламасăр, заем укçи пухас ĕç хăй тĕллĕн пулса пыракка шанса лараççĕ.

Укçа пухасси—заем кампанин пысăк ĕçĕ. Заем укçине кашни районрах, кашни ялтах сырăннă хыççăнах пухса пымă тăрăшмалла. Çапла тума халĕ майсем çитĕклĕ. Ĕçсăмăнсен политикăлла сĕкленнĕ питтех те пысăк. Вĕсем асăлă çĕнтерӳ ячĕпе Таван çĕршыва малалла аталанса пыма татăх та пулăшассăн. Заем укçине пухнă чух çакна шута илес пулать ĕнтĕ. Заем укçине пĕтĕмпех тата срокчĕ парса татасси—кашни ĕçсăмăнни Таван çĕршыв умĕнчи тивĕçĕ.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Пирĕн çĕнтерӳ

Тĕнче тăрăх асăнă фашизм—тăшман.
Тискер асап кӳнĕ Германи—паян
Ӳксе чĕркуçланчĕ ак пирĕн умăн,
Паян пăлăнать вăл хăйне каçарма.
Пайтах вăхăт урчĕ хăрушă çĕлен,
Нумай пурнăç çирĕп, юн тăкрĕ çĕмрен.
Анчах темле йывăр асаплăх пуссан та
Эпир çав кунсем шанчăка пĕтермен;
Тăшман Атăлпа Кавказа тапăнсан та,
Эпир хамăр ĕмĕт вутне сӳтермен.
«Тӳсетпĕр—çĕнетпĕр!.. Фронта пулăшас!
Эпир—тĕрĕс ĕçшĕн!»—тетчĕ пирĕн сас.
«Умра пирĕн—Сталин, юратнă Çулпуçĕ.
Ăçта çак Çулпуçĕ—унта çĕнтерӳ.
Ăçта пирĕн Сталин—малаллăх та уçă»—
Шутлаттăмăр тăтăш,—пулман шикленӳ.
Хăяр вăрçă шавĕ кĕрленĕ чухне
Итлерĕмĕр тимлĕн çулпуç сассине.
Совет ялавне алăра сыхласшăн
Ĕçлерĕмĕр пурте чунран вĕресе.
Юратнă çĕршыв ирĕкне хӳтлессишĕн
Никам та тăмарĕ хăйне шеллесе.
Нумай кĕрешни, вăй хупни çухалмарĕ.
Аваль çухалмарĕ нумай юн тăкни;
Ак çитрĕ вăл, çитрĕ—хĕвеллĕн çутатрĕ
Эпир кĕтнĕ вăхăт, эпир шутланă.

С. ЭЛКЕР.

Америкăри хаçатсем вăрçă преступникĕсене ответ тыттарма ыйтаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсем Бюхенвальдри, Дахаури тата ытти вырăнсенчи концентрацилле лагерьсенче тунă тискер, ĕçсем, Америка çарĕсем тĕнчесе пĕлсе тухнăскерсем, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи халăха питĕ тарăхтарнă. Фашистла преступниксене тивĕçлипе ответ тыттарма хытăран та хытăрах ыйтаççĕ.

«Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи хĕрарăмсен Наципе Совечĕ», хĕрарăмсен обществăлла тенденц организацине пĕрлештерсе тăранаканскер, гитлерла тискерлĕхсемшĕн, фашистла преступниксене чи çирĕп ответ тыттарма ыйтса, протест пичетлесе кăларнă.

Бюхенвальдри тата Дахаури гитлерла концентрацилле лагерьсенче пулса курнă палла хаçатсемпе журналсен редакторĕсем ушкăнĕ сыру пичетлесе кăларнă. Çав сырурра вĕсем, асăннă лагерьсенче тунă тискер ĕçсене фашистла нимĕç «философийĕн» уйрăлми пайĕ вырăнне хурса, фашистсен партийĕн мĕнпур руководителĕсене, Германин генеральнăй штабĕн, гестапон, охраннăй çарсен членĕсене тата Гитлер правительствинчи ответла чиновниксене ответ тыттарас тĕллĕпе тăкăла мерăсем йышăнма ыйтаççĕ.

«Курьер джорнэл» хаçат (вăл Луисвиллре тухать) фашистсем Польшăра, Совет Союзĕнче тата ытти çĕршывсенче тунă тискер ĕçсем çинчен пĕлтернисене ку тăрăнччен те ĕнентмен çынсене кринкласе, çакна кăтартса парать: Америка халăхĕн вăрçă преступникĕсене тивĕçлипе ответ тыттарасси тата фашизм, вăл кирек мĕнле тĕслĕ пулсан та, тĕнчипех пĕтерсе хурассине союзниксемпе пĕрле хăйсен аллине илмелле.

«Таймс» хаçат (вăл Спеттэре тухать) çапла шантăрса çырать: фашистла руководительсене çец мар, вĕсен ирсĕр ĕçĕсене тумашкăн наташниксене ытти-сене те çирĕп ответ тыттарĕç, тет.

«Таймс диспетч» хаçат (вăл Ричмондра тухать) тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн союзниксем нимĕçсен вăрçă преступникĕсене ответ тыттарасăр хăварнине питĕ пысăк йăнăш турĕç, çавна пула кайран калама çук йывăр никеç пулчĕ, тесе асăрхаттарать. «Союзниксен верховнăй командованийĕн представителĕсем, Англи парламенчĕпе Америка конгресĕн членĕсем,—тесе çырать хаçат,—гитлеровецсем тунă преступниксемпе тискерлĕхсене хăйсен куçĕсемпе курчĕç. Çав тискерлĕхсем кирек кам шухăшлама пултарнинчен те хăрушăрах. Халĕ пирĕн айăплисене ответ тытассинчен пăрăнса юлма ирĕк пама юрамасть. Çав хăрушă преступленисемшĕн пуриншĕн те тавăрмалла».

Герман Геринга тытăнă илни çинчен пĕлтерни нумайĕшне хаваслантарнă. Хиттер, Стил радиокомментаторсем тата ытти-сем те Геринпа Денипа халех вĕлерме ыйтаççĕ.

АМЕРИКĂРИ ХАÇАТСЕМ ГЕРИНГАН ПРЕСТУПЛЕНИЙĔСЕМ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Герингăн шухăш-кăмăлĕсем питĕ кичемлĕ. Вăл, вĕсĕ халь гитлеровец мар, тесе пĕлтернĕ. Анчах та Геринг вăл—вăрахурах, сывлăлерен. Вăл сынсене хавасланса, нимĕн шеллемесĕр вĕлернĕ. Вăл Германири ирĕклĕхĕн юлашкийĕсене пĕтерсе тăкнă полицие ертсе пынă. Роттердан хулинче хирĕç тăма пăрахнă хыççăн та ун çине бомбăсем пăрахма хушнă. Геринг хăйĕн преступленийĕсемшĕн ответ тытмасăр юлма пултараймасть.

«Нью-Йорк Геральд трибюн» хаçат çапла çырса пĕлтерет: Геринг власа Гитлер аллине памалли плана туса хатĕрленнĕ, Германин сывлăшри вăйĕсене, СС çарĕсене тата гестапона организацилеленĕ. Германи авиацийĕ Лондонпа Варшава çине пырса тăпаннине, еврейсене хĕсĕрленнине, концентрацилле лагерьсене тата Геринг организацилеленĕ фашистла ытти тиранне те тĕнче ĕмĕр-ĕмĕр манас çук, тесе пĕлтерет хаçат.

ГЕРИНГПА КЕССЕЛЬРИНГА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен командованийĕн штабĕ Парижран çапла пĕлтерет: Америкăн 7-мĕш армийĕн частĕсем паян Герман Геринга тата Германин хĕвеланăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ пулнă Альберт Кессельринга тытăнă илнĕ.

ГЕНЛЕЙН ВИЛНИ

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Чехословакин Судет облаçĕнче гитлерла «Гаулейтер» пулнă Генлейн концентрацилле лагерьте хăйне-хăй вĕлернĕ. Унта ăна ĕнер хупнă пулнă.

АВСТРИРЕ НАЦИСТСЕН ПАРТИНЕ ЧАРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЗАКОН КĂЛАРНĂ

ВЕНА, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Австрин Вăхăтлăх правительстви нацистсен партине чарса лартасси çинчен закон йышăннă. Çав закон тăрăх, нацистсен партине, унăн çар чăçĕсене, организацийĕсене учрежденийĕсене салатса яраççĕ. Партие çĕнĕрен пухмашкăн чарнă. Партин мĕнпур пурлăхĕ Австри республикин аллине куçать. Халĕ те çав партире тăракансене, е ăна усă парас тесе ĕçлекенсене, закон тăрăх, перçе пăрахмалла тата вĕсен мĕнпур пурлăхне туртса илмелле. Хăшĕпĕр чухне çеç перçе пăрахасси вырăнне 10 çултан пуçласа 20 çула çити тĕрмене хупмалла тума пултараççĕ. Закон тăрăх, 1933 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи апрелĕн 27-мĕшне çитиччснхи хушăра нацистсен партийĕнче тăнă пур нацистсене те çырса тухмалла. Çавăн пекех тата 1933 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1938 çулхи мартăн 30-мĕшне çитиччснхи хушăра 18 çул тултарса нацистсен партине е унăн çар организацине кĕнĕ çынсене пурне те государствăна сутпăшăн айăпламалла. Çакăн пек çынсене 5—10 çул хушши тĕрмене хупаççĕ. Нацистсен партине укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен чылай пулăшу панă çынсене те ответ тыттараççĕ.

АРГЕНТИНĂРИ ПОЛИЦИН РЕПРЕССИЙĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк Геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, полици, Пĕрлешнĕ нацисен Çĕнтерĕвне уявласа демонстрацисем тăвассине чарас тесе, Буэнос-Айресăн (Аргентина) центрне йышăнса илнĕ. Полици «Ла критика» хаçат издательствин сурчĕ çинчен тата ытти çуртсем çинчен те Совет Союзĕн ялавĕсене илме хушнă. Полици «Ла критика» хаçат издательне Таберда, асăлă редактора Дителла тата управляющие Каррераса арестленĕ. Темиçе сехет иртнĕ хыççăн Табордапа Дителла ирĕке кăларнă, анчах Каррерас халĕ те, политикăллă темиçе преступникпа пĕрле, тĕрмере ларать.

ИТАЛИН ТĂХĂР ПРОВИНЦИНЕ ИТАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ АЛЛИНЕ ПАНА

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Союзăлă комиссин комиссарĕ контр-адмирал Эллери Стоу Итали правительстви аллине Италин татах тăхăр провинцине пани çинчен каласа панă. Халĕ, çак тăхăр провинцине панă хыççăн, Итали правительстви аллинче Итали территорийĕн пилĕк пайран виçĕ пайĕ пулать. Унта 24 миллион çын пурăнать.

КЕСКЕН

* Нью-Йоркра уçăлакан Америкăна Совет Союзĕн строительство конференцийĕнче Америкăна Совет Союзĕн инженерĕсемпе архитекторĕсем пĕр-пĕрин производствăллă тата техникăллă опычĕсемпе паллашаççĕ.

* Тепĕр темиçе кунран Румынире çар преступникĕсен ушкăнне суд тума тытăнаççĕ. Суд умне Одессăри халăха вĕлерессине организацилекенсем тата вĕсене пулăшакансем Мачич тата Трестиояну генералсем тăраççĕ. (ТАСС).

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

1945 çулхи майăн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Парткабинет залĕнче (Ленинград урамĕ, 1) ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 30-мĕш сессийĕ уçăлать.

Сесси çак ыйтăва сӳтсе-явать: «Хула халăхне медицина ĕнчен пулăшу парас ĕçе лайăхлатасси çинчен».

Докладчик—Горсовет исполкомĕн председателĕ П. И. Аникин юлташ.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене сессие хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00116

Типография № 1 Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 15.000